ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН
САККУНЁ

ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН "ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИНЧЕ ÇУТ ÇАНТАЛĂКПА УСĂ КУРАССИ ÇИНЧЕН" САККУНЁН 10 СТАТЙИНЕ ТАТА ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН "ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИНЧЕ ВЫРĂНТИ ХĂЙ ТЫТĂМЛĂХА ЙЁРКЕЛЕССИ ÇИНЧЕН" САККУНЁН 10 СТАТЙИНЕ УЛШĂНУСЕМ КЁРТЕССИ ÇИНЧЕН

Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ
2024 çулхи нарăс уйăхĕн 14-мĕшĕнче
йышăннă

1 статья

Чăваш Республикин "Чăваш Республикинче çут çанталăкпа усă курасси çинчен" 1999 çулхи чӳк уйăхĕн 10-мĕшĕнчи 17 №-лĕ саккунĕн (Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн ведомоçĕсем, 1999, 32 №; 2002, 46 №; 2003, 53, 57 №-сем; 2004, 61 №; 2005, 65 №; 2006, 71 №; 2007, 73 №; 2008, 78 №; 2009, 80 №; 2010, 84, 86 №-сем; 2011, 90 №; 2012, 92 № (I том); "Республика" хаçат, 2012, раштав уйăхĕн 7-мĕшĕ; Чăваш Республикин Саккунĕсен пуххи, 2013, 7, 12 №-сем; 2014, 5, 11 №-сем; 2015, 2 №; 2016, 3, 10 №-сем; 2017, 11 №; "Республика" хаçат, 2018, ака уйăхĕн 4-мĕшĕ, раштав уйăхĕн 5-мĕшĕ; 2019, çу уйăхĕн 15-мĕшĕ; 2020, пуш уйăхĕн 11-мĕшĕ, çĕртме уйăхĕн 17-мĕшĕ, юпа уйăхĕн 28-мĕшĕ; 2021, юпа уйăхĕн 27-мĕшĕ; 2023, утă уйăхĕн 19-мĕшĕ, юпа уйăхĕн 4-мĕшĕ) 10 статйине çакăн пек улшăнусем кĕртес:

1) "а" пунктра:

а) вуннăмĕш абзац хăйĕн вăйне çухатнă тесе йышăнас;

ă) вун пĕрмĕш тата вун иккĕмĕш абзацсенче "мерăсем" сăмаха "ĕçсем" сăмахпа улăштарас;

2) "е" пунктăн иккĕмĕш тата виççĕмĕш абзацĕсенче "мерăсем" сăмаха "ĕçсем" сăмахпа улăштарас.

2 статья

Чăваш Республикин "Чăваш Республикинче вырăнти хăй тытăмлăха йĕркелесси çинчен" 2004 çулхи юпа уйăхĕн 18-мĕшĕнчи 19 №-лĕ саккунĕн (Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн ведомоçĕсем, 2004, 60 №; 2005, 63, 64 №-сем; 2006, 66, 69, 72 №-сем; 2007, 73, 74 №-сем; 2008, 76, 77 №-сем; 2009, 80, 81 №-сем; 2010, 84, 86, 87 №-сем; 2011, 89, 91 №-сем; 2012, 92 (I том), 94 №-сем; "Республика" хаçат, 2012, юпа уйăхĕн 5-мĕшĕ, раштав уйăхĕн 29-мĕшĕ; Чăваш Республикин Саккунĕсен пуххи, 2013, 7 №; 2014, 3, 9, 12 №-сем; 2015, 5, 10, 12 №-сем; 2016, 2, 6, 10 №-сем; 2017, 3, 9 №-сем; "Республика" хаçат, 2018, нарăс уйăхĕн 21-мĕшĕ, çĕртме уйăхĕн 27-мĕшĕ, авăн уйăхĕн 26-мĕшĕ; 2019, нарăс уйăхĕн 20-мĕшĕ, авăн уйăхĕн 18-мĕшĕ; 2020, авăн уйăхĕн 30-мĕшĕ, раштав уйăхĕн 17-мĕшĕ; 2021, ака уйăхĕн 30-мĕшĕ, юпа уйăхĕн 27-мĕшĕ; 2022, çу уйăхĕн 5-мĕшĕ, раштав уйăхĕн 28-мĕшĕ; 2023, ака уйăхĕн 26-мĕшĕ, утă уйăхĕн 19-мĕшĕ, раштав уйăхĕн 13-мĕшĕ) 10 статйин 1-мĕш пайĕн 35.2-мĕш пунктне улшăну кĕртес, унта ", çавăн пекех кану тĕллевлĕ шыв объекчĕсене усă курмалли правилăсене" сăмахсем хушса хурас.

3 статья

Çак Саккун ăна официаллă йĕркепе пичетлесе кăларнă кунран пуçласа вăя кĕрет.

Чăваш Республикин
Пуçлăхĕ – О. Николаев

Шупашкар хули
2024 çулхи нарăс уйăхĕн 15-мĕшĕ
5 №